26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 ДЕКАБРЬ 15 юнкун 247(6484) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне КОНЕВА

УКРАИНАРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, ăнăçлă наступлени туса пырса, паян, декабрĕн 14-мĕшĕнче, хаяррăн çапăçнă хыççăн, Украинăн экономика тĕлĕшĕнчен пысăк центрĕ пулса тăракан — ЧЕРКАССЫ хулине — нимĕçсен ДНЕПР шывĕн сылтăм енчи оборонин паха узелне тытса илчĕç.

ЧЕРКАССЫ хулине тытса илессишĕн пынă çапăçусенче КОРОТЕЕВ генерал-лейтенантăн çарĕсем тата авиаци генерал-лейтенанчĕн ГОРЮНОВАН летчикĕсем чапа тухнă.

Уйрăмах çаксем чапа тухнă:

БУТЕНКО полковникăн 254-мĕш стрелковăй дивизийĕ, СЕРГЕЕВ полковникăн 294-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ДРИЧКИН полковникăн 7-мĕш Гвардейски сывлăш десант дивизийĕ, САЗОНОВ полковникăн 373-мĕш Миргородски стрелковăй дивизийĕ, ГРИБАКИН полковникăн 293-мĕш бомбардировочнăй авиаци дивизийĕ, ПЕЧЕНКО полковникăн 304-мĕш истребительнăй авиаци дивизийĕ, РОДИН полковникăн 38-мĕш зенитнăй артиллери дивизийĕ, КОРОТКОВ полковникăн 173-мĕш танковăй бригади, ЕФРЕМЕНКО полковникăн 33-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери бригади, ЧЕПИЛЬ майорăн 1817-мĕш хăй тĕллĕн çӳрекен артиллери полкĕ, ШМАТКОВ подполковникăн 568-мĕш тупăллă артиллери полкĕ, НОВИКОВ подполковникăн 438-мĕш истребительнăй, противотанковăй артиллери полкĕ, КАРПАЧ майорăн 1322-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, БЕЛИЧЕНКО подполковникăн 17-мĕш Гвардейски минометнăй полкĕ, ЧУБРИК подполковникăн 490-мĕш минометнăй полкĕ, ЛУКЬЯНОВ полковникăн 259-мĕш уйрăм танковăй полкĕ, СЕМЕНОВ майорăн 804-мĕш çывăхри бомбардировочнăй авиаци полкĕ, ЖУЙКОВ майорăн 21-мĕш Гвардейски истребительнăй авиаци полкĕ, ДЕВЯТОВ полковникăн 992-мĕш çĕрлехи çăмăл бомбардировочнăй авиаци полкĕ, ПОЗДНЯКОВ капитанăн 556-мĕш уйрăм авиаци эскадрильи, ВАСИЛЬЕВ майорăн 366-мĕш инженернăй батальонĕ, КРЮКОВ майорăн 135-мĕш уйрăм инженерно-сапернăй батальонĕ тата ЕМЕЛИН капитанăн 133-мĕш уйрăм инженерно-сапернăй батальонĕ.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ЧЕРКАССЫ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «ЧЕРКАССКИ» тесе ят парас.

Малашне çав соединенисемпе чаçсене çапла чĕнмелле тăвас:

254-мĕш Черкасски стрелковăй дивизи,

294-мĕш Черкасски стрелковăй дивизи,

7-мĕш Гвардейски Черкасски сывлăш десант дивизийĕ,

293-мĕш Черкасски бомбардировочнăй авиаци дивизийĕ,

304-мĕш Черкасски истребительнăй авиаци дивизийĕ,

38-мĕш Черкасски зенитнăй артиллери дивизийĕ,

173-мĕш Черкасски танковăй бригада,

33-мĕш Черкасски истребительнăй противотанковăй артиллери бригади,

1817-мĕш Черкасски хăй тĕллĕн çӳрекен артиллери полкĕ,

568-мĕш Черкасски тупăллă артиллери полкĕ,

438-мĕш Черкасски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,

1322-мĕш Черкасски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,

17-мĕш Гвардейски Черкасски минометнăй полк,

490-мĕш Черкасски минометнăй полк,

259-мĕш Черкасски уйрăм танковăй полк,

804-мĕш Черкасски çывăх бомбардировочнăй авиаци полкĕ,

21-мĕш Гвардейски Черкасски истребительнăй авиаци полкĕ,

992-мĕш Черкасски çĕрлехи çăмăл бомбардировочнăй авиаци полкĕ,

556-мĕш Черкасски уйрăм авиаци эскадрильи,

333-мĕш Черкасски инженернăй батальон,

135-мĕш Черкасски уйрăм инженерно-сапернăй батальон,

133-мĕш Черкасски уйрăм инженерно-сапернăй батальон.

373-мĕш Миргородски стрелковăй дивизие, нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçса иккĕмĕш хут чапа тухнăскерне, ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе наградăлама тăратас.

Паян, декабрĕн 14-мĕшĕнче, 18 сехетре, хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, ЧЕРКАССЫ хулине ирĕке кăларнă хамăрăн паттăр çарсене, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, ЧЕРКАССЫ хулине ирĕке кăларассишĕн çапăçнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ
И. СТАЛИН.

1943 çулхи декабрĕн 14-мĕшĕ.



Тăван çĕршыв столици Мускав хамăрăн паттăр çарсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.
Г. ШИРОКОВПА ТРАХМАН Фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Чехословаки республикин Президенчĕ Эд. Бенеш господин Мускавра пулни

Чехословаки республикин Президенчĕ доктор Эд. Бенеш ĕнер, декабрĕн 12-мĕшĕнче, Пысăк театрта «Снегурочка» опера курнă.

Варринчи ложăра çаксем ларнă: СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ, Эд. Бенеш господин, Чехословакин СССР Союзĕнчи Посолĕ З. Фирлингер господин, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Е. Корнейчук юлташ, СССР Союзĕн Чехословаки Правительстви çумĕнчи Посолĕ В. З. Лебедев юлташ, Эд. Бенеш господин Кабинечĕн Начальникĕ Я. Смутный господин, Чехословакин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствин Информаци Службин Начальникĕ Я. Краус господин, Чехословакин Государство Совечĕн членĕ Б. Врбенский господин, Чехословаки çарĕн генерал-лейтенанчĕ А. Нижборский, Чехословакин СССР Союзĕнчи чаçĕсен командующийĕ генерал Я. Кратохвил, НКИД коллегийĕн членĕ А. П. Павлов юлташ, НКИД-ăн Европа ĕçĕсен 4-мĕш Отделĕн Заведующийĕ В. А. Зорин юлташ, Чехословакин СССР Союзĕнчи Çар Миссийĕн Начальникĕ полковник Г. Пика тата ыттисем те.

Театрта ларакансем М. И. Калинин юлташа, В. М. Молотов юлташа тата Эд. Бенеш господина нумайччен алă çупса кĕтсе илнĕ. (ТАСС).

Çĕнĕ çул елкисем тăвасси çинчен

ВЦСПС Президиуме профсоюзсен Центральный Комитечĕсене хĕллехи каникул вăхăтĕнче Мускавра, Ленинградра, Харьковра, Сталинора, Ростовра, Ворошиловградра, Сталинградра, Куйбышевра, Свердловскра тата ытти хуласенче те рабочисемпе служащисен ачисем валли çĕнĕ çул елкисем тума хушнă.

Çакăнпа пĕрлех ачасем валли утренниксемпе кино-сеансем тума, Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе, ученăйсемпе, писательсемпе, стахановецсемпе тĕл пулса калаçмалли вечерсем тума, художествăллă пултарулăх выступленийĕсем, çарпа спорт вăййисем, йĕлтĕрлĕ походсемпе прогулкăсем тума хушнă. Рабочи поселоксенче тата общежитисем çумĕнче катоксемпе тăвайккисем тумалла. (ТАСС).

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ тата Чехословаки Республики пĕр-пĕринпе туслă пурăнасси, пĕр-пĕрне пулăшса тăрасси тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен тунă ДОГОВОР

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ тата Чехословаки Республикин Президенчĕ, Совет Союзĕ тата Чехословаки Республики пĕр-пĕрне пулăшса тăрасси çинчен 1935-мĕш çулхи майăн 16-мĕшĕнче Прага хулинче алă пуснă Договора улăштарас тата ун çумне хушса çырас тесе, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствипе Чехословаки Республикин Правительстви Германие хирĕç пыракан вăрçăра пĕрле пулса кĕрешмелли çинчен 1941 çулхи июлĕн 18-мĕшĕнче Лондон хулинче çырса алă пуснă Килĕшĕвĕн условийĕсене тепĕр хут çирĕплетсе хурас тесе; вăрçă хыççăн мире сыхласа усрас тата малашне Германи енчен агресси пулассине пĕтерсе лартас тĕлĕшпе пĕр-пĕрне пулăшса тăрас тата пĕр-пĕринпе ялан туслăн пурăнмалла тăвас, вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе мирлĕн килĕштерсе ĕçлемелле тăвас тесе, çак Договора тума шут тытрĕç, ăна тумашкăн çаксене хăйсен уполномоченнăйĕсем пулма уйăрса лартрĕç:

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ — Вячеслав Михайлович Молотова, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне,

Чехословаки Республикин Президенчĕ — Зденек Фирлингера, Чехословаки Республикин Совет Союзĕнчи Посолне,

çаксем вара, хăйсен йĕркеллĕ тата кирлĕ пек формăпа çырнă полномочийĕсемпе пĕр-пĕрне паллаштарса, çакăн пирки калаçса татăлчĕç:

1-мĕш СТАТЬЯ.

Пĕр-пĕринпе калаçса татăлакан Аслă Енсем, ялан туслăн пурăнас тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе туслăн килĕштерсе ĕçлес, çавăн пекех тата пĕр-пĕрне пулăшса тăрас политикăна тытса пырас ĕçре пĕрлешме килĕшсе, Германие хирĕç тата Европăри агрессиллĕ ĕçсенче унпа çыхăннă пур государствăсене те хирĕç пыракан çак вăрçăра пĕр-пĕрне çар енчен тата ытти тĕлĕшпе те пулăшса тăма пулаççĕ.

2-мĕш СТАТЬЯ.

Пĕр-пĕринпе калаçса татăлакан Аслă Енсем çак вăрçă пынă вăхăтра Германин гитлерла правительствипе е унăн кирек-мĕнле ытти правительствипе те, вăл агрессиллĕ шухăша уççăнах пăрахман пулсан, нимĕн пирки те калаçмастпăр тесе, тата Германипе е Европăри агрессиллĕ ĕçсенче унпа çыхăннă кирек-мĕнле ытти государствăпа та калаçмастпăр тата пĕр-пĕринпе килĕшмесĕр вĕсемпе мĕнле те пулин перемири е мирлĕ договор тумастпăр тесе сăмах параççĕ.

3-мĕш СТАТЬЯ.

Хăйсен вăрçăччен мир тытса пырас тата пĕр-пĕрне пулăшас политикине, 1935 çулхи майăн 16-мĕшĕнче Прага хулинче алă пуснă Договоренче кăтартса панăскере, тепĕр хут çирĕплетсе парса, Пĕр-пĕринпе калаçса татăлакан Аслă Енсем çакăн пек сăмах параççĕ: çак Енсенчен пĕрин Германие хирĕç, вăл вăрçă хыççăнхи тапхăрта та хăйĕн «Дранг нах Остен» текен политикине çĕнĕрен пурнăça кĕртме пăхнă пирки, вăрçă пуçламалла пулса тăрсан, е çавăн пек вăрçăра Германипе тӳрех е ытти майпа пĕрлешнĕ пĕр-пĕр государствăна хирĕç вăрçă пуçламалла пулса тăрсан, Пĕр-пĕринпе калаçса татăлакан Аслă Енсенчен тепри çавăн пек майпа вăрçа хутшăннă тепĕр Енне çар енчен тата ытти тĕлĕшпе те пулăшать.

4-мĕш СТАТЬЯ.

Пĕр-пĕринпе калаçса татăлакан Аслă Енсем, хăйсен хăрушсăрлăхĕн интересĕсене шута илсе, мир тунă хыççăнхи тапхăрта пĕр-пĕринпе таччăн тата туслăн çыхăнса ĕçлеме тата çак принципсемпе ĕçлеме килĕшеççĕ: пĕр-пĕрин никама пăхăнманлăхне тата шалти законĕсене хисеплемелле, çавăн пекех тата тепĕр государствăн шалти ĕçĕсене хутшăнмалла мар. Вĕсем хăйсен хушшинчи экономикăллă çыхăнăвĕсене май килнĕ таран анлăрах сарма тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕрне экономика тĕлĕшĕнчен май килнĕ таран тĕрлĕ майпа пулăшса тăма килĕшеççĕ.

5-мĕш СТАТЬЯ.

Пĕр-пĕринпе калаçса татăлакан Аслă Енсенчен кашни Пĕр-пĕринпе калаçса татăлакан тепĕр Аслă Енне хирĕç мĕнле те пулин союз тума е ăна хирĕç тунă мĕнле те пулин коалицие хутшăнма килĕшмест.

6-мĕш СТАТЬЯ.

Çак Договор ăна алă пуснă хыççăнах законлă пулса тăрать, ăна кĕске вăхăтрах ратификацилемелле; ратификацилени çинчен калакан грамотăсене Мускавра май килнĕ таран хăвăртрах пĕр-пĕрне памалла.

Çак Договор ăна алă пуснă хыççăн 20 çул хушшинче законлă пулса тăрать. Пĕр-пĕринпе калаçса татăлакан Аслă Енсенчен пĕри çав Договора пăрахăçа кăларас кăмăл тунине çинчен çав 20 çулхи срок пĕтиччен вуникĕ уйăх малтан каласа хумасассăн, вăл Договор тепĕр пилĕк çуллăха юлать, малалла та çаплах пулса пырать, вăл Пĕр-пĕринпе калаçса татăлакан Аслă Енсенчен пĕри çав Договора пăрахăçласси çинчен иртсе пыракан пилĕкçуллăх пĕтиччен 12 уйăх малтан çырса пĕлтеричченех çавăн пек тăсăлса пырать.

Çакна ĕнентерме уполномоченнăйсем çак Договора алă пуснă тата ун çине хăйсен пичечĕсене пуснă.

Çак Договора икĕ экземпляр çырса хатĕрленĕ, кашнине вырăс чĕлхипе тата чехословак чĕлхипе çырнă.

Икĕ текстĕ те пĕр пекех законлă пулса тăраççĕ.

Мускав. 1943-мĕш çулхи декабрĕн 12-мĕшĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕ хушнипе В. МОЛОТОВ.

Чехословаки Республикин Президенчĕ хушнипе З. ФИРЛИНГЕР.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ тата Чехословаки Республики пĕр-пĕринпе туслă пуласси, пĕр-пĕрне пулăшса тăрасси тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен 1943 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнче тунă договор çумне хушса çырнă ПРОТОКОЛ

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ тата Чехословаки Республики пĕр-пĕринпе туслă пурăнасси, пĕр-пĕрне пулăшасси тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен Договор тунă чухне Пĕр-пĕринпе калаçса татăлакан Енсем пĕр-пĕринпе çакăн пирки килĕшрĕç: Совет Союзĕпе е Чехословаки Республикипе юнашар тăракан çĕршыв тата çак вăрçăра Германи таланнă пĕр-пĕр виççĕмĕш çĕршыв çак Договора алă пусма кăмăл тусассăн, ăна Совет Союзĕн Правительствипе Чехословаки Республикин Правительстви пĕр-пĕринпе килĕшсе, çак Договора алă пусма май параççĕ, çапла вара çак Договор виçĕ çĕршыв тунă Договор пулса тăрать.

Çак Протокола икĕ экземпляр çырса хатĕрлене, кашнине вырăс чĕлхипе тата чехословак чĕлхипе çырнă.

Икĕ текстĕ те пĕр пекех законлă пулса тăраççĕ.

Мускав. 1943-мĕш çулхи декабрĕн 12-мĕшĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕ хушнипе В. МОЛОТОВ.

Чехословаки Республикин Президенчĕ хушнипе З. ФИРЛИНГЕР.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ калани

Господин Президент, Сире эпĕ пирĕн столицăра—Мускавра—Совет Союзĕнчи халăхсен ячĕпе саламлатăп.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ тата Чехословаки Республики пĕр-пĕринпе туслă пурăнасси, пĕр-пĕрне пулăшса тăрасси тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен паян тунă Договор нимĕç фашизмне хирĕç тата Германин кирек-мĕнле çĕнĕ агрессине хирĕç пыракан кĕрешӳре пирĕн пĕрлехи ĕçе нумай пулăшĕ.

Пирĕн халăхсем хушшинчи яланхи туслăха, пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен 1935-мĕш çулхи майăн 16-мĕшĕнче Прага хулинче тунă Договорта тата Германие хирĕç пыракан вăрçăра пĕрле кĕрешмелли çинчен пирĕн икĕ Правительство 1941-мĕш çулхи июлĕн 18-мĕшĕнче Лондонра тунă Килĕшӳре кăтартнăскере, халĕ çĕнĕ Договорпа çирĕплетсе панă. Çак Договор вăл çав туслăха аталантарас ĕçре историллĕ паха пусăм пулса тăрать.

Пирĕн халăхсем тата пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсем те пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлессине çирĕплетни—нимĕç фашизмне тата Европăри юнлă преступленисенче унпа пĕр каварлă пулса тăракансене пĕтерсе тăкас ĕç ăнăçассине пĕлтерет.

Чехословакин халăхĕн асапĕсемшĕн, юнĕшĕн тата куççульĕшĕн тавăрмалли сехет çывхарса килет. Унăн асапĕсемпе хуйхине пирĕн халăх, гитлеровецсем килсе тапăннин пĕтĕм йывăрлăхне тӳссе курнăскер, тăшмана хирĕç хăватлăн пырса çапнă-скер, ылханлă захватчиксене хальхи вăхăтра мĕнпур совет территорийĕсенчен пĕтĕмпех хăваласа кăларассăн кĕрешекенскер, лайăх ăнланать.

Çакна палăртмалла: гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçăра пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен калакан Договорта çырса хуни халĕ ĕнтĕ пурнăça кĕрсе пырать; пĕр-пĕринпе çапла килĕштерсе ĕçлессине пирĕн халăхсен ывăлĕсен юнĕпе çирĕплетнĕ, çав пирĕн ывăлсем халĕ эпир пĕрле çĕнтерессишĕн, союзниксен ĕçĕ çĕнтерессишĕн пĕр-пĕринпе юнашар тăрса кĕрешеççĕ.

Çак Договор пирĕн халăхсене вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлемешкĕн тата Германия хăйĕн кивĕ вăрă-хурахла политикине «Хĕвелтухăçнелле наступлени тăвас»—«Дранг нах Остен» текенĕ политикине çĕнĕрен пурнăçа кĕртме хăтланнисене пĕтерсе лартмашкăн çирĕп никĕс хывса парать. Германи империализмĕн ют çĕршывсене туртса илес политикине хирĕç пирĕн çĕршывсенчи халăхсен мĕнпур вăйпа кĕрешмелле.

Господин Президент, Сире тата Сирĕн сотрудникĕрсене çак Договора тунăшăн саламлатăп. Ку Договор пирĕн халăхсен чаплă пуласлăхĕшĕн кумай çулсем хушши усăллă пулса тăмалла.

Эпĕ Сире çак Договора алă пуснипе телейлĕн вĕçленнĕ ĕçĕршĕн тав тăватăп.

Чехословаки Республикин Президенчĕ Эд. Бенеш господин калани

Господин Председатель, господинсем, Сире эпĕ паян çак Договора алă пусма май килнĕшĕн хам питĕ хĕпĕртени çинчен каласа парасшăн. Çак Договор пирĕн наци историйĕнче тата Совет Союзĕпе Чехословаки хушшинчи çыхăнусен историйĕнте калама çук паха ĕç пулса тăрать тесе шутлатăп эпĕ. Чехословаки 20 çул хушшинче пирĕн халăхпа государствăна нимĕç империализмĕнчен сыхлама тăрăшнине çак Договор вĕçлерĕ ĕнтĕ. Пирĕн Договор çак вăрçăра кирлĕ утăм пулса тăрать. Вăл этемле мар тискер тата вăрă-хурахла нимĕç шовинизмне хирĕç пырать. Нимĕç шовинизмĕ çак вăрçăра пуринчен малтан хăйпе кӳршĕллĕ славян государствисене—Чехос

(Юлашни 2-мĕш страницăра).

Чехословаки Республикин Президенчĕ Эд. Бенеш господин калани

Юлашки ловакие, Польшăна, Югославие тата Совет Союзне пĕтерсе лартма тăрăшрĕ. Çак Договор вăл пулас йĕркен пĕр кирпĕчĕ пулса тăрать, çав йĕрке пирĕншĕн тата пирĕн мĕнпур союзниксемшĕн усăллă пулĕ, вăл Европăри мире çирĕплетме пулăшĕ.

Господин Председатель, эпĕ Сире тата Сирĕн политикăпа çар деятелĕсене, çак Договора тăвас ĕçе хутшăннăскерсене, тав тăватăп. Эпĕ ĕнерех каларăм, çак Договор вăл Чехословакишĕн лайăх пурнăç тума тата ăна политика, çар, экономика тата культура тĕлĕшĕнчен Совет Союзĕнчи тăванла халăхсемпе килĕштерсе ĕçлеме май парать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 13-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 13-мĕшĕнче КИРОВОГРАД енче пирĕн çарсем малалла талпăнса пынă, темиçе ял тытса илнĕ.

КРЕМЕНЧУГ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, унăн оборонин АДАМОВКА, КОЖАРКИ, ГУЩЕВКА, ЯНИЧЬ, ВДОВИН ХУТОР ятлă çирĕплетнĕ пункчĕсене тытса илнĕ.

МАЛИН хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманăн пехотипе танкĕсене хирĕç çапăçнă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Декабрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 35 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 24 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Кировоград енче пирĕн çарсем наступлени туса пынă. Совет чаçĕсене малалла кайма чарас тесе, тăшман танкĕсем темиçе хут та контратака тунă. Пирĕн артиллеристсемпе бронебойщиксем, танкистсемпе сыхăнса кĕрешсе, тăшманăн 11 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, нимĕçсене каялла чакарнă. Пĕр гвардейски соединенин чаçĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, малалла куçнă та темиçе яла тытса илнĕ. Çав пунктсемшĕн çапăçнă чухне нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне, 12 тупине тата 2 бронетранспортерне пĕтерсе тăкнă.

Летчик-истребительсем — гварди лейтенанчĕ Боевский тата гварди лейтенанчĕ Кальсин тăшман йышăннă территори тĕлĕнче нимĕçсен «Фокке—Вульф—189» йышши самолетне тĕл пулнă. Гварди лейтенанчĕ Боевский тăшман самолетне атакăланă та ăна персе ӳкернĕ. Çапăçура Боевский самолетне сиенленĕ, ăна вара вут хыпса илнĕ. Летчикăн ирĕксĕрех çĕр çине анса лармалла пулнă. Гварди лейтенанчĕ Кальсин ăна пулăшма васканă. Вăл çĕр çине анса ларнă та Боевские хăйĕн çунакан машинине сирпĕнтерсе яма пулăшнă, унтан ăна хăйĕн самолечĕ çине лартнă та сывлăша вĕçсе хăпарнă. Летчиксем часах вара хăйсен аэродромĕ çине ăнăçлăн анса ларнă.

* * *

Кременчуг хулинчен хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем, малалла куçса, темиçе яла йышăнса илнĕ. Тăшман Адамовка ялĕн районĕнче уйрăмах вăйлăн хирĕç тăнă. Пĕр чаçăн боецĕсем, хаяррăн çапăçса, нимĕçсене çав тĕреклетнĕ пунктран сирпĕнтерсе кăларнă, тăшманăн 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра совет подразделенийĕсем нимĕçсенчен 10 тупă, боеприпас складне тата çар пурлăхĕ тиенĕ обоза тытса илнĕ.

* * *

Малин хулинчен кăнтăртарахра тăшманăн танкĕсемпе пехотине хирĕç çапăçнă. Пĕр соединени участокĕнче нимĕçсем умлăн-хыçлăн 7 хут атакăланă. Пирĕн боецсем вĕсен пур атакисене те сирсе янă, унтан, нимĕçсене хирĕç пырса çапса, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 6 танкне, хăй тĕллĕн çӳрекен 2 тупине тата 40 автомашинине ытла çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра нимĕç танкĕсемпе автоматчикĕсен пĕр ушкăнĕ пирĕн часть тăракан вырăна кĕрсе кайнă. Совет подразделенийĕсем гитлеровецсен каялла чакмалли çулĕсене татнă та, хаяррăн çапăçса, вĕсене пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 300 вилли ытла выртса юлнă тата çунса кайнă е персе çĕмĕрнĕ 16 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупи ларса юлнă.

* * *

Житомир облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ, сасартăк тапăнса, икĕ чугун çул станцине тытса илнĕ. Пĕр станцире партизансем нимĕçсен çар хатĕрĕсем тиенĕ 4 эшелонне пĕтерсе тăкнă, тепĕр станцире пĕтĕм чугун çул хуçалăхне сирпĕнтерсе янă. Кунсăр пуçне, 12 паровоз тата 300 вагона çити пĕтерсе тăкнă, авиабомбăсен пысăк складне сирпĕнтерсе янă. Совет патриочĕсем çав станцие 12 кун хушши ĕнтĕ хăйсен аллинче тытса тăраççĕ, нимĕçсен фашистла захватчикĕсемпе çапăçаççĕ. Çав вăхăт хушшинче партизансем 400 гитлеровеца ытла вĕлернĕ е аманнă.

* * *

Тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсем тăшман тылĕнче кĕрешекен совет партизанĕсем активлăнрах кĕрешме пуçлани çинчен каласа параççĕ. Нимĕçсен 132-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 436-мĕш полкран Хĕрлĕ Çар енне куçнă ефрейтор Ганс Д. çапла каласа панă: «Нимĕçсен çар влаçĕсем партизансене çавăрса илсе пĕтерсе тăкма хăтланнисем пурте путланса ларчĕç. Нумаях пулмасть партизансен отрячĕ нимĕçсен 16-мĕш армийĕнчи 1-мĕш армейски штурмовой батальона аркатса тăкнă. Çак кунсенче Порхов хулинче офицерсен канашлăвĕ пынă çурта сирпĕнтерсе янă. Çав çурт пĕтĕмпех ишĕлсе аннă. Нимĕçсен нумай офицерĕ вилнĕ е аманнă».

Нимĕçсен 299-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи артиллери полкĕн 8-мĕш батарейинчен тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Руди Люкс çапла каласа панă: «Пирĕн полка хăйĕн позицине улăштарма приказ пачĕç. Вăрманла пынă чухне пире партизансем кĕтмен çĕртен тапăнчĕç. Вĕсем пире пур енчен те атакăларĕç. Эпир калама çук хăраса ӳкрĕмĕр. Батарея командирĕ обер-лейтенант материальчăр чаçа сирпĕнтерсе яма хушрĕ, анчах вăл ĕçе тума май килмерĕ—салтаксем мĕнпуррине пĕтĕмпех пăрахрĕç те тарса саланчĕç. Хамăр тупăсене çухатнăшăн айăпласа, командовани пире штрафной батальона ячĕ».

Нимĕçсен 480-мĕш батальонĕн 3-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Антон Кельнер çапла каласа панă: «Пирĕн батальон Витебск патĕнче чугун çула хуралласа тăратчĕ. Эпир кашни çĕр çĕрĕпех ура çинче тăраттăмăр. Постсем сăнамалли пĕр вышкăран теприн патне пĕр тăтăшах çӳретчĕç, анчах та партизансем хăйсен ĕçне тăватчĕç-тăватчĕçех. Партизансем рельса сирпĕнтерсе ямасăр е эшелонсене ӳпĕнтерсе ямасăр пĕр кун та ирттермен. Пĕтĕмĕшпе илсе каласан, оккупациленĕ территори тăрăх сайра хутра çеç ăнăçлăн кайма пулать».

* * *

Аялрах нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Полесье облаçĕнчи Асаревичи ялĕнче тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Нимĕç захватчикĕсем пирĕн яла оккупациленĕренпе ялти нумай çынна персе вĕлерчĕç. Фашистла пуçкасакансем Степанида Протаса тата унăн икĕ хĕрне, Андрей Шевченкăна Марк Шевченкăна, Маланья Плущая, Татьяна Пацука, Иван Царанока, Мина Бельченкăна тата ытти çынсене те вĕлерчĕç. Каялла чакнă чухне нимĕçсем халăхăн пысăк пайне ирĕксĕрлесе хăйсемпе пĕрле илсе кайрĕç. Пите сахал çын кăна вăрмана тарса кайса фашистла каторгăран çăлăнса юлма пултарчĕ. Гитлерла бандитсем 40 çурта ытла, шкула, армана тата колхоз çурт-хуралтисене çунтарса ячĕç. Вĕсем колхоз пурлăхне тата хресченсен хăйсен пурлăхĕсене çаратса пĕтерчĕç».

Акт çине Асаревичи ялĕнчи çак çынсем алă пуснă: И. Акуленко, И. Ефименко, К. Протас, В. Пацук тата ыттисем те.

Çĕнĕ обязательство илчĕç

Шупашкарти водосвет коллективĕ союзлă виçĕ державăн руководителĕсен Тегеранри конференцийĕн историллĕ решенийĕсене сӳтсе-явнă хыççăн хăй çине çĕнĕ обязательство илнĕ,—ĕç тухăçлăхне тата ытларах ӳстерме пулчĕ. Машинист Бедняков, слесарь Милютин, электромонтер Петров юлташсем задание икĕ-виçĕ хут ирттерсе тултарма пулчĕç. Çавăн пекех стахановецсем Минеев, Алексеев юлташсем те ĕç нормине 250 процент тултарма сăмах пачĕç.

Рабочисем пурте: «Эпир çĕнтерӳ инçе маррине ăнланатпăр. Çĕнтерӳ часах пуласси пирĕнтен те килет. Фронтпа çĕршывшăн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме пулатпăр»,—теççĕ.

(Хамăр инфор.).

ГОСУДАРСТВĂНА—ТЫРĂ

Государствăна сутнă тырра тата виçĕ район турттарса пĕтерне

Государствăна сутнă тырра хатĕрлев пункчĕсемпе потребкооперации склачĕсене турттарса пĕтерессипе ретне кунран кун çĕнĕ районсем хутшăнаççĕ. Ĕнер, декабрĕн 14-мĕшĕнче, Куславкка (райком секретарĕ Крючков, райсовет исполкомĕн председателĕ Прытченков), Красноармейски (райком секретарĕ Григорьев, райсовет исполкомĕн председателĕ Александров) тата Пăрачкав (райком секретарĕ Кукушкин, райсовет исполкомĕн председателĕ Белоглазов) районĕсем сутнă тырра пĕтĕмпех хатĕрлев пункчĕсене турттарса пĕтерне.

Пăрачкав районĕ хăйĕн тивĕçне пурнăçларĕ

ПАРАЧКАВ, декабрĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Паян районри колхозсем государствăна сутнă тырра пĕтĕмпех хатĕрлев пункчĕсемпе сельпо склачĕсене турттарса пĕтерчĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем çак ответлă та пысăк ĕçе пурнăçа кĕртнĕ çĕрте хăйсен пысăк активлăхне кăтартса пачĕç. Молотов ячĕпе тăракан колхоз, унта пурĕ те 23 кил кăна, государствăна 12 тонна тырă сутнă. Çак хисепре колхозниксем сутнă тырă 2 тонна шутланать. Ильич ячĕпе тăракан колхоз 12 тонна тырă ыраш тата тулă сутнă.

Халĕ районри колхозсем государствăна çĕрулми сутма тытăнчĕç. Паянхи куна 37 тонна сутнă та ĕнтĕ. Вăл хисепрен 5 тоннине складсене леçсе панă.

Б. КУКУШКИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Çĕнтерӳ сехетне çывхартассишĕн

КӲКЕÇ, декабрĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем государствăна сутнă тырра декабрĕн 13-мĕшĕнче пĕтĕмпех хатĕрлев пунктне турттарса пĕтерчĕç.

Районри колхозсенче государствăна тырă сутасси малалла пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем, мухтавлă Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳ сехетне çывхартма пулăшас тесе, государствăна хушса тырă сутаççĕ. Çапла, «Правда» колхоз 610 пăт, çавăн пекех «Новый быт» колхоз 610 пăт тырă сутнă. Вĕсем хушса сутнă тырра çийĕнчех хатĕрлев пунктне леçсе панă.

В. КАРАУШЕВ.

116.268 пăт хатĕрлев пунктне леçсе панă

СОВЕТСКОЕ, декабрĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем тата колхозниксемпе колхозницăсем государствăна малтан 116.000 пăт тырă сутма пулнă. Çак патриотла ĕç ӳссе пынă май вĕсем, 116.268 пăт сутса, декабрĕн 14-мĕшĕ тĕлне çав тырра хатĕрлев пункчĕсемпе сельпосен склачĕсене пĕтĕмĕшпех леçсе пачĕç. Кунсăр пуçне колхозниксем государствăна çĕнĕрен 3000 пăт тырă сутрĕç. Çав тырра паян-ыранах хатĕрлев пунктне турттарса пĕтереççĕ.

П. НИКИТИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Малта пыракан колхозсен пулăшăвĕ

КАНАШ, декабрĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем государствăна сутнă тырра хатĕрлев пунктне турттарса пĕтерессине малтне çывхарса пыраççĕ. Паянхи куна 35 колхоз хăйсем сутнă тырра пĕтĕмпех леçсе панă.

Тырă турттарас тĕлĕшпе малта пыракан колхозсем кӳршĕри колхозсене пулăшма тытăнчĕç. Çапла «Красное пламя» колхоз—Чкалов тата Киров ячĕпе тăракан колхозсене, «Мотор» колхоз—«Канаш», Каганович ячĕпе тăракан тата «Идея Ленина» колхозсене пулăшаççĕ. Колхозсене пулăшнă çĕрте хальхи вăхăтра 220 лашапа ĕçлеççĕ.

А. ДОЛГОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Çĕрулми сутаççĕ

ЭЛЕК, декабрĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Колхозсем тата колхозниксемпе колхозницăсем государствăна сутнă тырра хатĕрлев пункчĕсене турттарнă вăхăтрах çĕрулми леçме тытăнчĕç. Ку таранччен государствăна 251 тонна ытла çĕрулми сутнă. Вăл шутран 610 центнер çĕрулмине складсене леçсе панă.

Колхозниксен патриотла ĕçĕ

КАЛИНИНО, декабрĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче государствăна тырă сутас ĕç патриотла çĕкленӳпе пулса иртрĕ. Декабрĕн 12-мĕшĕнче колхозсемпе колхозниксем государствăна сутнă 119.826 пăт тырра пĕтĕмпех хатĕрлев пункчĕсене леçсе пачĕç. Ку хисепре колхозниксемпе колхозницăсем сутнă тырă 35.190 пăт шутланать.

Государствăна сутна тырра турттарасси уйрăмăнах союзлă виçĕ держава руководителĕсен конференцийĕ йышăннă Декларацие ăнлантарса панă хыççăн хăвăртлăн пулса пычĕ.

Государствăна тырă сутас ĕçре коммунистсемпе комсомолецсем тата ялти актив пахa тĕслĕхсем кăтартрĕç. Вĕсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчен пысăк вырăнта тăракан çак задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртме пысăк пулăшу пачĕç.

Районри колхозсем тата колхозниксем халĕ государствăна çĕрулми сутма тытăнчĕç.

Ф. РОМАНОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ТАВАРĔСЕНЕ ТЫРĂ СУТАКАНСЕНЕ ТĔРĔС ВАЛЕÇСЕ ПАМАЛЛА

Государствăна тырă сутакансем валли республикăна таварсем чылай илсе килнĕ. Вăл шутра, пуринчен ытла, хуçалăхра кулленхи кирлĕ япаласем. Анчах та хăшпĕр райпотребсоюзсем çав таварсене вырăнсене илсе кайма васкамаççĕ. Хăшпĕр райпотребсоюзсем таварсене илсе кайсан та чылай вăхăт хушши складсенче тытаççĕ. Чăвашсоюз ку тĕлĕшпе райпотребсоюзсене начар контрольлесе тăрать. Шупашкар районĕнчи колхозсем лаша кӳлмелли хатĕрсем илесшĕн, анчах вĕсем лавккасенче сахал. Çав вăхăтрах райпотребсоюзăн складĕнче тахçантанпах 5.000 тенкĕлĕх чĕр тирсем выртнă. Çавна декабрĕн 9-мĕшне çитиччен те Чăвашсоюз колхозниксене тырă сутнăшăн памалли çинчен пĕлтермен. Склада декабрь уйăхĕн малтанхи кунĕсенчех супăнь, чулхасемпе носкисем тата краççин илсе пынă пулнă. Анчах райпотребсоюз çав таварсене колхозсемпе колхозниксем патне çитерме васкаман. Мĕншĕн тесен, районри руководительсем, таварсене мĕн чухлĕ памалли йĕркесене тĕплĕн ăнлантарса пама пĕлмен. Колхозниксем валли мĕнле таварсем илсе килни çинчен тата илсе килесси çинчен пĕлтерсе тăмаççĕ.

Государствăна тырă сутнăшăн илсе пынă таварсене ытти çĕре салатса пĕтерни те ВКП(б) райкомĕсемпе райпотребсоюзсем çак ĕçпе интересленменни çинчен калать. Шупашкар райпотребсоюзĕн кладовщикĕ С. Сергеев 9,6 килограмм, Ишлей райпотребсоюзĕн закупщикĕ Пучков 56 килограмм супăне хăйсем тĕллĕн салатнă. Государство контроль наркомачĕн представителĕ тĕрĕсленĕ хыççăн çеç Сергеев юлташăн ĕçне прокуратура аллине панă. Райпотребсоюз председателĕ Петров юлташ ку тĕлĕшпе нимĕнле мера та йышăнман. Таварсене тĕрĕс валеçессишĕн вĕсем ответлăха туймаççĕ. Пĕтĕм таварсене колхозсене яраççĕ те колхозсем вара вăл таварсене колхозниксене кирлĕ чухлĕ валеçсе памаççĕ. Ишлей районĕнчи «Ишлей» колхоз (председателĕ Волков юлташ) колхозниксене сутма илнĕ 6 декалитр эрехрен 10 литрне кама кирлĕ ăна сутса пĕтернĕ. Тавар сутмалли ведомоçсене те тирпейсĕр тăваççĕ, хăшне-пĕрне алă пусмасăрах таварсем параççĕ. Ишлей районĕнчи чылай колхозсемпе колхозниксем паянхи куна çитсе те тырă сутнăшăн мĕнле-мĕнле таварсем парасси çинчен пĕлмеççĕ.

Кун пек çитменлĕхсем татах та пур. Государствăна тырă сутнăшăн килнĕ таварсене сутас ĕçре чăрмантарса пыракансене вăхăтра ответ тыттармалла.

Югославири ĕçсем çинчен

Çакă паллă пулса тăчĕ: ноябрь уйăхĕн вĕçĕнче Югославин партизансем ирĕке кăларнă территорийĕнче Югославири фашизма хирĕçле Вечен иккĕмĕш пухăвĕ пулса иртнĕ. Çав пухăва Югославири пур районсенчен те представительсем пынă. Çав пуху Фашизма хирĕçле Вечене законсем кăларакан тата вĕсене ĕçе кĕртекен чи аслă орган туса хума йышăннă, Югославин вăхăтлăх правительстви пулса ĕçлемешкĕн вара Югослави халăхне ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитет туса хунă.

Фашизма хирĕçле Вечен çĕнĕрен суйланă президиумне тата Югослави халăхне ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитета Югославири мĕнпур халăхсен представителĕсем тата Югослави халăхне ирĕке кăларасшăн кĕрешекен мĕнпур общество сийĕсемпе партисен представителĕсем кĕнĕ.

Фашизма хирĕçле Вече президиумĕн председателĕ пулма халлех Югославири пите паллă политика деятельне Иван Рибар доктора суйласа лартнă, Югослави халăхне ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн пуçлăхĕ пулма—Югославие ирĕке кăларасшăн кĕрешекен халăх çарĕн главнокомандующине Иосиф Броз-Титона суйласа лартнă. Титона вара маршал званине панă.

Пуху Югославие федераци принципĕсемпе йĕркелеме йышăннă.

Югославири çак ĕçсене Англипе США-ра ырланă ĕнтĕ. Çав ĕçсене Совет Союзĕн Правительстви те лайăх ĕçсем тесе хаклать, вĕсем Югослави халăхĕсене гитлерла Германие хирĕç малашне те ăнăçлăн кĕрешме май параççĕ тесе шутлать. Çав ĕçсем тата Югославири мĕнпур халăхсен вăйĕсене пĕрлештерес тĕлĕшпе Югославин çĕнĕ пуçлăхĕсем пысăк ăнăçу тунине кăтартаççĕ.

Михайлович генерал четникĕсен ĕçĕ çине те Совет Союзĕнче çак еннелех пăхаççĕ. Кунта килнĕ хыпарсем тăрăх, вĕсен ĕçĕсем халиччен Югослави халăхне нимĕç оккупанчĕсене хирĕç кĕрешме пулăшма мар, кансĕрлесе, сиен туса пынă, çавăнпа та вĕсен ĕçĕсене Совет Союзĕнче ырламаççĕ.

Совет правительстви, Югославири мĕнпур ĕçсем çинчен тата партизансен организацийĕсем çинчен тĕплĕнрех пĕлес тесе, Югославие, Британи правительстви янă пекех, çар миссине яма шут тытрĕ.

НАРКОМИНДЕЛАН ИНФОРМАЦИ БЮРОВĔ.

Ют çĕршывсенче

Венгри дипломачĕн киревсĕр ĕçĕ

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Стокгольмри журналистсем çапла калаççĕ: Венгрин Швеци столицинчи дипломатиллĕ миссийĕ (ăна халь Венгрин çĕнĕ посланникĕ Уллейн-Ревицкий пуç пулса ертсе пырать) вăйлăн пропаганда тăвать. Уллейн-Ревицкий пуçарнипе ноябрь уйăхĕнче Стокгольмра «Швеци Кăнтăр-хĕвелтухăç Европа ыйтăвĕсемпе ĕçлекен информаци бюровĕ» ятлă бюро туса хунă. Çав бюро вăл тĕрĕссипе Венгри миссийĕн пропаганда тăвакан центрĕ пулса тăрать.

Хăйĕн «информацийĕнче» тата хаçатсене, агентствăсене, ют çĕршыв корреспонденчĕсемпе миссийĕсене ярса тăракан ытти материалĕсенче те çав «бюро» çак шухăша вăйлăн сарать: Венгрия вăрçа гитлерла Германи майлă пулса «кĕтмен çĕртен çеç» хутшăннă пулать, вăл çак вăрçа нимĕçсем Венгрие оккупацилессинчен хăраса çеç хутшăннă пулать, т. ыт. те.

Кунти журналистсем Венгри миссийĕн çав ĕçне çапла хаклаççĕ: вăл Венгрин власть пуçĕнче тăракан ушкăнне тӳрре кăларма тата Венгрин гитлерла Германи союзникĕ пулса тăрса тунă преступленийĕсемшĕн тытмалли ответлăхне пĕчĕклетсе кăтартма тепĕр хут киревсĕр хăтланни пулать, теççĕ.

КĔСКЕН

● Филадельфире «Висконсин» ятлă çĕнĕ линкор туса пĕтернĕ, вăл 45.000 тонна таять. Çак линкор вăрçă вăхăтĕнче туса пĕтернĕ «Нью-Джерси» тата «Айова» ятлă линкорсем йышшиех. «Висконсин» линкорăн тăршшĕ 860 фут, сехетре вăл 33 узел (61 километр) каять. Унăн тĕп хĕçпăшалĕ—16 дюймлă 9 тупă.

● Англин çар министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин хĕçпăшаллă вăйĕсем Италие пырса кĕнĕренпе — сентябрĕн 3-мĕшĕнчен пуçласа ноябрĕн 23-мĕшне çитиччен—акăлчансен 16.704 çын вилнĕ, е аманнă, е пĕр хыпарсăр çухалнă.

● Юлашки вăхăтра Германин Бельгире тăракан оккупациллĕ чаçĕсенчи салтаксемпе офицерсем хăйсене хăйсем вĕлерни пулнă. Гентра вырнаçнă оккупациллĕ чаçсенче нумаях пулмасть 7 çар çынни хăйсене хăйсем вĕлернĕ, вĕсем хушшинче пĕр майор пур. Çавăн пекех Хĕвелтухăç Фландрире те нимĕçсен 3 çар сынни хăйсене хăйсем вĕлернĕ.

● Японин подводнăй лодки Америкăн Гилберт утравĕ патĕнчи операцисене хутшăннă „Лиском Дей" ятлă авианосецне путарнă. Америкăн çак карапĕ Гилберт утравĕ патĕнче путарнă пĕртен пĕр карапĕ пулса тăрать. (ТАСС).

Редакцие килнĕ çырусем

Колхоз выльăхĕсем çине чунсăррăн пăхаççĕ

ТАВАЙ. Ураскассинчи «Ĕçлĕх çулĕ» колхоз (председателĕ Федоров) кăçалхи хĕле начар хатĕрленнĕ. Выльăхсен витисене тĕплĕн юсаман. Кăçал 42 ĕне пăруламалла, анчах пăрусене хупмалли ăшă вите çук.

Колхозри выльăх-чĕрлĕхсем çине сӳрĕк пăхнă пирки 4 пăру, 3 сурăх вилчĕ. Колхоз председателĕ Федоров ку тĕлĕшпе нимĕнле мера та йышăнмасть. Колхоз выльăх-чĕрлĕхĕ çине чунсăррăн пăхакансене ответ тыттармалла мар-ши?

С. НИКОЛАЕВ.

Пĕлтерӳ

Декабрĕн 17-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашская ур., 6) докладчиксем, агитколлективсен руководителĕсем тата беседчиксем валли инструкциллĕ доклад пулать.

Доклад теми: **«И. В. Сталин (вăл çуралнăранпа 64 çул тултарнă тĕле)».**

Докладчик—Ялхуçалăх институчĕн марксизмпа ленинизм никĕсĕсен кафедрин заведующийĕ Лебедев юлташ.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Шупашкар пристанĕ пур организацисемпе учрежденисене те çакăн çинчен пĕлтерет: 1943-мĕш çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1944-мĕш çулхи февралĕн 1-мĕшне çитиччен Шупашкар пристанĕ 1944-мĕш çулхи навигацире Атăл бассейнĕнчи пур шывсем тăрăх та грузсем турттарса пама тата буксирпа сулăсем турттарма договорсем тăвать. Грузсене хăварт çӳрекен пăрахутсемпе те тата хуллен çӳрекен пăрахутсемпе те яма юрать.

Шупашкар пристанĕ.

Изоляци заводĕнче ĕçленĕ чухне лаша тарнă. Паллисем çакăн пек: кĕсре, тĕсĕ—кăвак-çӳрен, çӳллĕшĕ 126 сантиметр, çилхине касна.

Çав лаша ăçтине пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Чувашская АССР. Октябрький район, Правлению колхоза им. Мичурина.

Кувтан ытти çĕре кайса ялан ĕçлеме главнăй бухгалтерсем, старши бухгалтерсем, бухгалтерсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, д. 7, (вход со двора), контора А. Т. К. УС — 4.

Шупашкар леспромхозне çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: бухгалтерсем, шоферсем, тимĕрçĕсем, платниксем, десятниксем тата чернорабочисем.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Чебоксары, Ул. Максима Горького, 23. Телефон. 4—58.

2—1.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

декабрĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун сасла илемлĕ

„МЕЧТА"

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 18, 20 тата 22 сехетре.

Часах

„ЖДИ МЕНЯ"

ятлă фильм кăтартма пуçлаççĕ.

Кашни юнкун, шăматкун, вырсарникун

„ТАШĂ"

Джаз-оркестр вылять. Пуçламĕшĕ 23 сехетре. Билетсем 25 тенкĕ тăраççĕ.

ЯЛХУÇАЛĂХ БАНКĔН

Чăваш конторине конторăра хăйĕнче тата Çĕмĕрлепе Вăрнар районĕсенче ĕçлеме пунктсен уполномоченнăйĕсем тата кредитованипе финансировани тĕлĕшпе ĕçлекен инспекторсем кирлĕ.

Асăннă работниксене продуктсем рабочисен нормипе параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Чебоксары, здание Госбанка, контора Сельхозбанка.

2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 1896 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6 59X42 п. л. Тираж 14.400 экз.